Ламар

**Чечексемпе кайăксем**

Хĕвеллĕ кун, каçкӳлĕм, юрататăп
Тӳлек çилпе пуплен чечексене.
Темле хальччен курман пекех пăхатăп
Пралук çинчи хура чĕкеçсене.
Сăрт хĕрринчи ман пĕчĕк çуртăм çийĕн
Сулхăнланать ту сывлăшĕ хуллен.
Киленĕçлĕн, тăраниччен аш çинĕн,
Чĕрне тăсать кушак тем хушшинчен.
Вара эп ĕмĕр-ĕмĕртен хунанă
Этем çинчен, пур чĕрĕ чун çинчен
Шухăшласа ларатăп тахçанччен,
Пĕчченлĕхĕм ун чух ман лăпкă, канлĕ.
Çĕрле куратăп ваттисем çине
Çӳлтен тăпра тăкан çăлтăрсене.
1968

*Туслăх ытамĕ. – Шупашкар, 1985. – С. 133-134.*